# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

31 (7456) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи апрелĕн (ака) 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Район уй-хирĕсенче

## Çурхи ĕçсем тытăнаççĕ

Районта ерипен çурхи уй-хир ĕçĕсем пуçланаççĕ. Апла пулин те вăрлăха имçамласси кирлĕ шайра мар. Çак вăхăта Ленин яч. хис. хуçалăхра 40 тонна, «Рассвет» агрофирмăра 30 тонна, Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче 55 тонна акара усă курмалли вăрлăха имçамлама ĕлкĕрнĕ. Планпа вара районĕпе 3871,2 тонна имçамлама пăхнă.

Çĕр улми вăрлăхне суйласа яровизацилеме хурас ĕçсем пыраççĕ. Районĕпе 4555 тонна çĕр улми вăрлăхне яровизацилемелле. 710 тонна (16 процент) яровизацилеме хума ĕлкĕрнĕ. Çак ĕçе Е. Андреев яч. хис. (5 тонна), «Герой» (190 тонна), Ильич яч. хис. (90 тонна), Ленин яч. хис. (20 тонна), «Оринино» (140 тонна), «Передовик» (70 тонна), Суворов яч. хис. (20 тонна), Чапаев яч. хис. (40 тонна), «Чемеево» (30 тонна) хуçалăхсенче, «Лидер» агрофирмăра (5 тонна) тытăннă.

Матвеевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче 12 гектар çинче кĕрхи культурăсене апатлантарнă.

«Ударник» хуçалăхра 40 гектар çинче кĕрхи культурăсене минераллă удобренисемпе апатлантарнă тата сÿреленĕ.

Кăçалхи çурхи ака-суха ĕçĕсен калăпăшĕ вара çапларах. 3678 гектар çинчи кĕрхи культурăсене апатлантармалла тата сӳрелесе нӳрĕке хупласа хăвармалла. Кунсăр пуçне нумай çул ӳсекен курăксем 12801 гектар çинче. Ку ĕçсене çак лаптăксенче те туса ирттерес пулать. Ака ĕçĕсем валли 15841 гектар çĕр хатĕрлемелле.

Конкурс

## Чăваш пики – Оринин хĕрĕ



Апрелĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарта республикăри иккĕмĕш "Чăваш пики" конкурс иртнĕ. Ăна ЧР Культура министерствипе Чăваш наци конгресĕ йĕркеленĕ.

Чи илемлĕ пике ята çĕнсе илессишĕн 16 - 22 çулсенчи чăвашла аван калаçакан вун виçĕ хĕрупраç ăмăртнă. Вĕсем хăйсемпе паллаштарнă, чăваш наци çи-пуçне кăтартнă, чăваш апачĕпе хăналанă тата кăткăс ыйтусене хуравланă. Кĕскен каласан, чи илемлĕ пике çеç мар, тĕрлĕ енлĕ аталаннă çын пулнине те кăтартнă.

"Чăваш пики" ята пирĕн районти Наталья Каликова тивĕçнĕ. Ăмăртакансем хушшинче Муркаш районĕнчен тепĕр пике те пулнă. Ирина Егорова "Ăс пике" ята çĕнсе илнĕ.

Наталья Чăваш Республикин ятне май уйăхĕнче Пĕтĕм Раççейре иртекен "Раççейри Чăваш пики" конкурсра хӳтĕлеме хатĕрленет.

Ăнăçусем сунатпăр.

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурсра.**

Йыхрав

## Черетсĕр 18-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 18-мĕш ларăвне 2007 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче 10 сехетре район администрацийĕн ларусен залĕнче пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма çак кун йĕркине сĕннĕ:

1. «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2020 çулчченхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕ çинчен» Саккун проекчĕ çинчен.

2. Муркаш районĕн 2007 çулхи 1-мĕш кварталти экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсем çинчен.

3. 2006 çулта Муркаш район бюджетне мĕнле пурнăçлани çинчен.

4. Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнче шутланакан пурлăха тытса пымаллин тата унпа усă курмаллин положенине çирĕплетесси çинчен.

5. Муркаш районĕнчи муниципаллă унитарлă предприятисем тупăш пайне Муркаш районĕн бюджетне хывмалли йĕрке тата унăн виçи пирки калакан положение çирĕплетесси çинчен.

6. Муркаш районĕн территорийĕнче вырнаçнă çĕр участокĕсен усă сервитучĕсене ирттермелли тата чармалли йĕрке çинчен.

7. Муркаш районĕнчи граждансен право тăвас пуçарулăхĕн положенине çирĕплетесси çинчен.

8. Муркаш районĕнче граждансен пухăвĕсене ирттересси пирки пĕлтермеллин тата ирттермеллин йĕркин положенине çирĕплетесси çинчен.

9. Муркаш районĕн территорийĕнче граждансен конференцийĕсене ирттермеллин йĕркин положенине çирĕплетесси çинчен.

10. Муркаш районĕн территорийĕнче граждансенчен ыйтса пĕлессине (опрос) ирттересси пирки пĕлтермеллин тата ирттермеллин йĕркин положенине çирĕплетесси çинчен.

11. Муркаш районĕн муниципаллă право акчĕсене пичетлесе кăлармалли (халăха пĕлтермелли) официаллă çăл куçсем çинчен.

12. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн йышăнăвĕсене хатĕрлемелли йĕрке çинчен.

13. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2001 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчи С-3/4 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн Хисеп кĕнекин положенийĕ çинчен» йышăнăвне хушусемпе улшăнусем кĕртесси çинчен.

14. Наградăсем пама тăратасси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене, предприятисемпе организацисен ертӳçисене чĕнеççĕ.

Çĕнĕлĕх

## Пасарсенче йĕрке пулмалла

2006 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче «Ваккăн тавар сутмалли пасарсем тата Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» 271-ФЗ № Федераллă саккун тухнăччĕ. Вăл кăçалхи апрелĕн 11-мĕшĕнче вăя кĕчĕ. Ку ыйтупах Чăваш Республикин «Ваккăн тавар сутмалли пасарсем çинчен» Саккунĕ те кăçалхи мартăн 20-мĕшĕнче кун çути курчĕ. Çавна май малашне пасарсем йĕркеленĕ чухне архитектурăпа градостроительнăй нормăсемпе правилăсене пăхăнма тивĕç, планировкăпа тирпей-илем кĕртмелли проектсене пăхса хумалла. Халĕ ĕçлекен пасарсене вара асăннă Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн вăл вăя кĕнĕренпе 60 кунран кая юлмасăр е, тепĕр майлă каласан, 2007 çулхи июнĕн 11-мĕшĕччен кирлĕ шая кĕртсе çитермелле.

Асăннă саккун çавна çирĕплетет. Ваккăн тавар сутассипе çыхăннă хутшăнусене право тĕлĕшĕнчен йĕркелессине, таварсем сутассипе çыхăннă ĕçсене пурнăçлассине, кунта тĕрлĕрен услугăсем парассине Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен саккунĕсемпе тата ытти нормативлă тата право акчĕсемпе килĕшӳллĕн туса пымалла.

Пасарсем йĕркелеме район администрацийĕ ирĕк пама тивĕç. Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне вара ваккăн тавар сутмалли пасарсене, вĕсен ĕçне-хĕлне йĕркелессипе çыхăннă пур право акчĕсене те йышăнма тата çирĕплетме Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн полномочи панă. Çавăн пекех законодательствăпа пасарсен тата сутуçăсен реестрне йĕркелемелли тата туса пымалли йĕркене, суту-илӳ валли пасарсенче вырăн уйăрса пама килĕшӳ тумалли йĕркене пăхса хунă. Çулталăк хушшинче вара ваккăн тавар сутмалли пасарсен çак требованисене тивĕçтермелле (вĕсем 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕреççĕ): пасарăн чи пысăк е чи пĕчĕк лаптăкĕ, пасарта вырнаçнă çурт-йĕрсен, сооруженисен тата вĕсен ăшĕнчи пӳлĕмсен характеристики, вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнле инçĕшĕнче лармалли, сутă тумалли вырăнсен характеристики, вĕсен тата склад, хушма пӳлĕмсен лаптăкĕсем.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн сĕнĕвĕпе килĕшӳллĕн кăçалхи апрелĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн 140 № йышăнăвĕпе район территорийĕнче ваккăн тавар сутма пасар йĕркелессипе килекен заявленисене пăхса тухма комисси йĕркеленĕ. Çавна палăртса хăвармалла. Комисси ларăвĕсене заявленисем килнине кура ирттереççĕ, заявленисене килнĕренпе икĕ эрне хушшинче пăхса тухаççĕ. Ваккăн тавар сутма пасар йĕркелеме ирĕк парассишĕн ответлă орган район администрацийĕ пулса тăрать. Ваккăн тавар сутассине йĕркелеме право илме кирлĕ бланка çирĕплетнĕ.

Çапла вара çӳлте асăннă требованисене пурнăçламасăр Чăваш Республикин тата район территорийĕнче ваккăн тавар сутмалли пасарсене йĕркелеме çук. Ваккăн тавар сутмалли пасар йĕркелес шут пулсан вара заявленипе район администрацине пымалла, пур требованисене те пурнăçламалла та ирĕк илмелле.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Республикăра

## Социаллă проектсене пулăшасси ӳсет

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров эрне пуçламăшĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Республикăри министерствăсем федераци министерствисемпе çак кунсенче Федерацин адреслă инвестици программине (ФАИП) кĕртмелли объектсем тĕлĕшпе килĕшӳ тунă. Николай Федоров çак ĕçе ăнăçлă тесе палăртнă – 2008 çулта ФАИПра Чăваш Республикин интересĕсене хӳтĕлеме 1,5 миллиард тенкĕ уйăрма палăртнă. Çакă, кăçалхипе танлаштарсан, 500 миллион тенкĕ нумайрах. Кунсăр пуçне республикăна çул-йĕр тума субсиди парĕç. Çак сферăра Чăваш Ен тĕллевĕсене палăртассин тата пурнăçлассин калăпăшĕпе лидер шутланать. 2008 çулта тата 9 физкультурăпа спорт комплексĕ тума 314 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă. Республика ертӳçи каланă тăрăх, çакă 2009 çулта хуласенче тата пур районта та хальхи вăхăтпа килĕшсе тăракан спорт керменĕсем тăвассипе çыхăннă пысăк проекта вĕçлеме май парĕ.

Канашлу вăхăтĕнче Николай Федоров сывлăх сыхлавĕн тата вĕрентӳ объекчĕсене çĕклеме укçа-тенкĕ виçине ӳстерме май пурри çинче чарăнса тăнă. Çакна валли федерацин профильлĕ министрĕсемпе тата Патшалăх Думин "Пĕрлĕхлĕ Раççей" («Единая Россия») фракцине кĕрекен депутачĕсемпе тата та çывăхрах ĕçлемелле.

**ЧР ПА пресс-служби.**

Пĕрлехи информаци кунĕ

## Президент Çырăвĕпе тата Стратеги проекчĕпе паллаштараççĕ

Паян, апрелĕн 18-мĕшĕнче, районта Пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Районти ĕç коллективĕсенче пулма, çынсемпе тĕл пулса калаçма, вĕсене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе йышăнма ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов, республика вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕн çумĕ М.Ю. Толстов, РФ Пенси фончĕн республикăри управленийĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи суд экспертизин лабораторийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов килеççĕ.

Йышăну

## Пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерме

Паллă ĕнтĕ, çурхи тата çуллахи кунсем çитсе килнĕ май пушар тухас хăрушлăх ӳсет. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ «Çурхи тата çуллахи тапхăрта районти экономика объекчĕсенче тата ялсенче пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе туса ирттермелли ĕçсем çинчен» йышăну тунă.

Йышăнура ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, районти 37 № пушар чаçĕн пуçлăхĕн С.П. Митрофановăн, ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн, район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пушарсем пулассине асăрхаттарас енĕпе туса ирттермелли ĕçĕсене уйăрммăн палăртнă.

Вырăнсенче пушар сӳнтермелли хатĕрсем юсавлă тата комплектлă пулмалла. Ялсенче майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 30-мĕшĕччен çĕрлехи вăхăтра граждансем черетпе дежурство тăрассине йĕркелемелле. Май тата сентябрь уйăхĕсенче Муркашпа Мăн Сĕнтĕр ялĕсенче уйрăм çынсен секторĕнче профилактика рейчĕсем ирттерме пăхнă. Çавăн пекех агитаципе пропаганда, граждансене пушар хăрушсăрлăх правилисене вĕрентессине те айккинче хăвармалла мар. «Новая Юнга», «Сеятель», «Нива», «Чемеево», Ленин яч. хис., «Передовик» хуçалăхсенче кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пушар сӳнтермелли автомашинăсене юсаса пĕтермелле, вĕсен водителĕсем дежурство тăрассине йĕркелемелле.

Пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе ытти пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсене те кая юлмасăр туса ирттерме хушнă.

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, ытарайми аннене, ырă чунлă кинĕме, чи хисеплĕ çыннăмăра, Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Ольга Мефодьевна СИНИЧКИНАНА** 50 çулхи юбилейпа саламлатпăр.

Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр, сăн питри йăл кулă хĕвел ăшши пек ăшăтса тăтăр пире. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, хунямăшĕ, Ванюшкинсен çемйи.**